Федеральный Государственный Образовательный СТАНДАРТ

# *ФГОСпа килĕшӳллĕ урок ирттересси*

**«Урок – это зеркало общей и педагогической культуры учителя, мерило его интеллектуального богатства, показатель его кругозора, эрудиции»**

**В.А.Сухомлинский**

**«Плохой учитель преподносит истину, хороший учит ее добывать»**

**А. Дистервег**



# *Литература*

1. Бутурлакина Т.Ю. Методическое пособие по созданию современного урока по ФГОС (для преподавателей гуманитарных дисциплин образовательных учреждений СПО и НПО)/ Т.Ю. Бутурлакина. – Армавир, 2013.
2. Копотева Г.Л. Дидактика уверенности в себе: проектируем урок, реализующий требования ФГОС / Г.Л. Копотева, И.М. Логвинова – Волгоград: Учитель 2016. – 143 с.
3. Крылова О.Н. Новая дидактика современного урока в условиях ведения ФГОС ООО: Методическое пособие / О.Н. Крылова, И.В. Муштавинская. – СПБ.: КАРО, 2014.
4. Трунцева Т.Н. Проектирование технолоргических карт уроков литературы и русского языка. 5-9 классы. – М.: ВАКО, 2015.



Федеральный Государственный Образовательный СТАНДАРТ

# Хальхи урока мĕнле ирттермелле?

**1.Класа йĕркелени** (ачасене ĕçе анлă явăçтарни)

**2. Тĕллеве палăртни** («аса ил» → «çĕннине пĕл»→ «вĕренсе çит» схемăпа ачасем хăйсем тĕллĕн урок тĕллевне палăртни

**3.Пĕлӳ çителĕксĕр пулнине ăнланса илни** (вĕрентекен урокра ачасене проблемăллă лару-тăру патне илсе пырать, çавна тишкернĕ майăн ачасем ăна татса пама хăйсен пĕлĕвĕ çитменнине ăнланса илеççĕ)

**4. Хутшăну** (мăшăрпа тата ушкăнпа çĕнĕ пĕлӳ шырани)

**5. Пĕр-пĕрне тĕрĕслени**

**6. Рефлекси** (урокра мĕн çĕннине пĕлнине тата мĕне вĕреннине ачасем ăнланса илни тата ăна сăмахпа каласа пани)

# Хальхи урока мĕнле ирттермелле?

Вĕрентекенĕн хăйĕн тата ачасен ĕçне шухăшласа хумалла, урок темине, тĕллевĕпе задачисене уçăмлă палăртмалла

Урок проблемăллă пулмалла

Урокăн лайăх пуçланса лайăх вĕçленмелле

Учителĕн прблемăллă лару-тăру йĕркелемелле, ачасене ĕçлеме хавхалантармалла

Тĕ п вырăнта - ачасем

Пултарулăха аталантармалли урок пулмалла

Вăхăта тата сывлăха сыхлас ĕç

Урок ырă кăмăллă пулмалла

Пĕтĕмлетĕве ачасем тăваççĕ

Ачасен пĕлĕвне тата пултарулăхне шута илмелле

Учителĕн методика ăсталăхĕ курăнмалла

планирование обратной связи

***Урок – это не получение отвлеченных от жизни знаний, а необходимая подготовка к жизни, её узнавание, поиск полезной информации и навыки ее применения в реальной жизни.***

Федеральный Государственный Образовательный СТАНДАРТ

## Урок схеми улшăнни

Учитель кăтартса ăнлантарни (учитель ачасем умĕнче тăрса ăнлантарать, кайран ыйтса пĕлет

→

Учительпе ачасем пĕрле ĕçлеççĕ, ачасем пĕр-пĕринпе ĕçлеççĕ

**Вĕрентекен – режиссер, ачасем - хутшăнакансем**

*Хальхи урок мĕнле хатĕрленмелле?*

- **Çĕннине палăртни («Определение нового»).** Урокра мĕнле çĕнĕ пĕлӳ (правило, алгоритм, ăнлав т.ыт. те) илмеллине учитель малтанах уçăмлă палăртса хурать.
- **Проблемăллă лару-тăрăва конструкцилени («Конструирование проблемной ситуации») .** Паллах, проблемăллă лару-тăру урокра хăй тĕллĕнех пулма пултарать, анчах та палăртнă тĕллеве пурнăçлас тесен хăш вăхăтра проблема сиксе тухма пултарнине, ăна мĕнлерех татса памаллине учителĕн малтанах уçăмлă пĕлсе тăмалла.

*Хальхи урок мĕнле хатĕрленмелле?*

Федеральный Государственный Образовательный СТАНДАРТ

- **Ĕçсене планлани («Планирование действий»)**. Урок проблемине палăртнă хыççăн урокăн тĕп пайĕ – хутшăну (коммуникаци) – пуçланать. Çак тапхăртах ачасене хăйсене тĕллĕн ĕçлеттермелле.
- **Проблемăна татса памалли шухăшсене планлани («Планирование решений»).** Проблемăна мĕнлерех татса памаллине планланă май мĕн асра тытмалла:
- учителĕн хăйĕн пĕтĕмлетĕвне малтанах хатĕрлесе хумалла (вăл пулăшнипе çав пĕтĕмлетӳ патне ачасем хăйсемех çитме пултараççĕ);
- проблемăна татса памалли çĕнĕ сведенисене шырама хатĕр ответ е пĕтĕмлетӳ çук çăлкуççем хатĕрлемелле.

*Хальхи урок мĕнле хатĕрленмелле?*

- **Результата планлани («Планирование результата»).** Учителĕн проблемăна татса панине сăмахпа мĕнлерех каламаллине те шутласа хумалла. Сăмахран, «Проблемăна эпир мĕнле татса патăмăр-ха?» ыйтăвăн хуравĕ те пулма пултарать кунта.
- **Çĕнĕ пĕлӳпе усă курмалли ĕçсене планлани («Планирование заданий для применения нового знания»).** Проблемăллă, ачасене шырав е тĕпчев ĕçне явăçтармалли, пĕччен е ушкăнпа тумалли ĕçсем планламаллине асра тытмалла.

# Йăлана кĕнĕ уроксене хальхи (ФГОСпа килĕшӳллĕ хатĕрленĕ) уроксене танлаштарни

| Мĕн улшăннă? | Йăлана кĕнĕ урок | ФГОСпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ урок |
|---|---|---|
| Çĕнĕ темăна пĕлтерни | Вĕрентекен вĕренекенсене пĕлтерет | Ачасем хăйсем урок темине палăртаççĕ |
| Урок тĕллевĕсемпе задачисене пĕлтерни | Ачасен мĕне вĕренмеллине учитель калать. | Мĕн пĕлнипе пĕлменнине ăнланса илсе, «аса ил» → «çĕннине пĕл» → «вĕренсе çит» схемăпа ачасем хăйсем тĕллĕн урок тĕллевне палăртаççĕ. |
| | Тĕллеве пурнăçлас тесен ачасен мĕн тумалли çинчен учитель калать. | Палăртнă тĕллеве пурнăçламалли çул-йĕре ачасем хăйсем планлаççĕ. |

## Йăлана кĕнĕ уроксене хальхи (ФГОСпа килĕшӳллĕ хатĕрленĕ) уроксене танлаштарни

| Мĕн улшăннă? | Йăлана кĕнĕ урок | ФГОСпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ урок |
|---|---|---|
| Урокăн тĕп тапхăрĕсем | Çĕнĕ темăна ăнлантарнă тата ачасен пĕлĕвне çирĕплетнĕ чух (80%) ытларах учитель калаçать. | Çĕнĕ темăна вĕренес умĕн ачасем хăйсен пĕлĕвĕ çителĕксĕр пулнине ăнланса илни пысăк пĕлтерĕшлĕ (вĕрентекен урокра ачасене проблемăллă лару-тăру патне илсе пырать, çавна тишкернĕ майăн ачасем ăна татса пама хăйсен пĕлĕвĕ çитменнине ăнланса илеççĕ). Ачасем ытларах хăйсем тĕллĕн (60-70%) ĕçлеççĕ. |
| Учителĕн тĕп тĕллевĕ | Мĕн планланине пĕтĕмпех туса ĕлкĕрмелле. | Информаци тупса унпа ĕçлемелли, ĕç-хĕл мелĕсене пĕтĕмлетмелли, вĕренӳ задачисене лартмалли ĕç-хĕл пулмалла. Ачасен ĕç-хĕлне вĕрентекенĕн пĕлсе йĕркелемелле. |

# Йăлана кĕнĕ уроксене хальхи (ФГОСпа килĕшӳллĕ хатĕрленĕ) уроксене танлаштарни

Федеральный Государственный Образовательный СТАНДАРТ

| **Мĕн улшăннă?** | Йăлана кĕнĕ урок | **ФГОСпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ урок** |
| --- | --- | --- |
| Урокра усă курмалли глаголсем | *Çырса илĕр, танлаштарăр, тупăр, пурнăçлăр* т. ыт.те. | *Тишкерĕр, ĕнентерĕр, ăнлантарăр, танлаштарăр, символпа кăтартăр, схема е модель тăвăр, малалла тăсăр, пĕтĕмлетĕр, тĕпчĕр, хаклăр, улăштарăр, шутласа кăларăр* т.ыт.те. |
| Йăлана кĕмен уроксем | Йăлана кĕмен уроксем сайра хутра ирттереççĕ. | Йăлана кĕмен урок вăл ФГОСа тивĕçтерекен урок çеç, çавăнпа йăлана кĕмен урок пирки калаçмастпăр. |

# Йӑлана кӗнӗ уроксене хальхи (ФГОСпа килӗшӳллӗ хатӗрленӗ) уроксене танлаштарни

| Мӗн улшӑннӑ? | Йӑлана кӗнӗ урок | ФГОСпа килӗшӳллӗн хатӗрленӗ урок |
|---|---|---|
| Тӗрӗслев irттерни | Ачасем ӗçе мӗнле тунине учитель тӗрӗслесе тӑрать. | Ачасем хӑйсене хӑйсем, пӗр-пӗрне тӗрӗслеççӗ. |
| Йӑнӑшсене тӳрлетни | Ачасем ӗçе тунӑ вӑхӑтра тата ун хыççӑн учитель йӑнӑшсене тӳрлетсе пырать. | Ачасем йывӑрлӑхсене палӑртаççӗ те йӑнӑшсене хӑйсем тӗллӗн тӳрлетеççӗ. |

# Йăлана кĕнĕ уроксене хальхи (ФГОСпа килĕшӳллĕ хатĕрленĕ) уроксене танлаштарни

| Мĕн улшăннă? | Йăлана кĕнĕ урок | ФГОСпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ урок |
|---|---|---|
| Хаклани | Ачасем урокра мĕнле ĕçленине учитель хак парать | Результатсене пăхса ачасем хăйсен тата юлташĕсен ĕçне хаклаççĕ. |
| Вĕренӳ условийĕсем | Учитель класа хăй хатĕрлет | Ачасем вĕренӳ материалĕ хатĕрлеççĕ, презентацисем ирттереççĕ. |

# Йăлана кĕнĕ уроксене хальхи (ФГОСпа килĕшӳллĕ хатĕрленĕ) уроксене танлаштарни

| Мĕн улшăннă? | Йăлана кĕнĕ урок | ФГОСпа килĕшӳллĕн хатĕрленĕ урок |
| --- | --- | --- |
| Вĕренӳ условийĕсем | Учитель класа хăй хатĕрлет | Ачасем вĕренӳ материалĕ хатĕрлеççĕ, презентацисем ирттереççĕ. |
| Вĕреннин результачĕсем | Предмет результачĕсем<br><br>Ачан портфолио çук. | Предмет результачĕ çителĕксĕр, харкамлăх тата пур предмета та вĕренме кирлĕ результатсем пулмалла.<br>Портфолио пулмалла. |

# Йӑлана кӗнӗ уроксене хальхи (ФГОСпа килӗшӳллӗ хатӗрленӗ) уроксене танлаштарни

| Мӗн улшӑннӑ? | Йӑлана кӗнӗ урок | ФГОСпа килӗшӳллӗн хатӗрленӗ урок |
|---|---|---|
| Урока пӗтӗмлетни | Учитель ачасенчен вӗсем мӗн ас туса юлнине ыйтса пӗлет. | Рефлекси ирттерни. |
| Киле ӗҫ парсаяни | Учитель пӗлтерет тата ӑнлантарса парать (ытларах чухне – пурин валли те пӗр ӗҫ). | Ачасем хӑйсен пултарнине шута илсе учитель сӗннӗ ӗҫсенчен пӗрне суйласа илеҫҫӗ. |

# ФГОСпа килĕшӳллĕн урок ирттерекен учителĕн мĕнле пулмалла

- Хушнă ĕçе уçăмлă та тĕрĕс ăнлантарса калать.
- Çĕнĕ пĕлĕве хатĕр памасть, ачасене шухăшлама, илнĕ пĕлӳпе пурнăçра усă курма вĕрентет.
- Хушнă ĕçе икĕ хут каламасть.
- Чĕлхе единицисене тĕрлĕ енчен хаклама паракан комплекслă ĕçсем хатĕрлет, тепĕр майлă каласан, пĕр хăнăхтарура пĕр тĕрлĕ ĕç кăна тутармасть.
- Ачасен хуравĕсене хăй тӳрлетмест тата ăнлантармасть, ку ĕçе ачасене хăйсене тутарать.
- Ачасем мĕн каланине тепĕр хут каламасть.
- Ачасен мĕнле йывăрлăхсем пулма пултарнине малтанах пĕлсе тăрать, ачасем пĕрре тусах пурнăçлайман ĕçсене урок вăхăтĕнчех улăштарать.